# Журналистсемшĕн - лайăх шкул

Суббота, 05.04.14

Професси шайĕ пысăк пулнишăн, хастарлăхшăн, публикацисен çивĕчлĕхĕпе тĕрĕслĕхĕшĕн И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн пресс-службăпа информаци пайĕ "Вуз пресс-служби - 2013" Пĕтĕм Раççейри I конкурсра диплома тивĕçнĕ. Унта Раççейри 65 регионти 181 аслă шкул хутшăннă.

Конкурс 2013 çулта ака уйăхĕнчен пуçласа раштавччен иртнĕ. Унăн тĕп тĕллевĕ - вĕренӳ учрежденийĕсен имиджне çирĕплетесси тата пĕр пĕтĕмĕшле информаци уçлăхне туса хурасси. Жюри аслă шкулсен официаллă сайчĕсенчи материалсене хакланă. Пресс-службăн ĕç-хĕлĕ шăпах çĕнĕ хыпарсен пуянлăхĕнчен, тĕшшинчен лайăх курăнать.

Çакна та палăртмалла: ЧПУн пресс-служба пайĕ университетра пĕлӳ илекен пулас журналистсемшĕн - питĕ лайăх шкул. Кунта нумай студент журналистика кафедрин ертӳçи Анатолий Данилов йĕркелесе пынипе пултарулăх практикинче пулать. Сăмах май, университетăн çĕнетнĕ сайчĕ 2010 çултанпа ĕçлет. Вăл Раççейри аслă шкулсен сайчĕсен йышĕнче тата "Професси пĕлĕвĕ парасси" тематика рейтингĕнче чи лайăх 20 сайт йышне кĕрет. Виçĕ çул çурă хушшинче ЧПУ сайтне 2 миллион та 174 пин çын кĕнĕ. Хушăран талăкра унпа 6000 çын паллашать. Университет сайтне кĕнисĕр пуçне çынсем журналистика тата экономика факультечĕсен сайчĕсене те кăмăллаççĕ.

А.ГРОМОВА